

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ХУДОЖНИКĔ ЭЛЛИ МИХАЙЛОВИЧ ЮРЬЕВ (25.III.1936 — 17.I.2001)

**Çут çăлтăр витĕр çул курнать тесе,**
**Утас çула çӳл тӳпере суйлатпăр.**
**Суйлатпăр та, туссем-тăванăмсем,**
**Каллех пĕрне-пĕри куçран пăхатпăр.**

**Камсем эпир, камсем,**
**Ăçта каятпăр?**
**Камсем эпир, камсем,**
**Мĕскер шыратпăр?**

**Асаттесен йĕрри пурах тесе**
**Хыçри куна сĕвемлеме тăратпăр.**
**Тăратпăр та, туссем-тĕванăмсем,**
**Каллех çип çыхланнишĕн тарăхатпăр.**

**Камсем эпир, камсем,**
**Ăçта каятпăр?**
**Камсем эпир, камсем,**
**Мĕскер шыратпăр?**

**Çул сылтăм енĕ сулнăклă тесе,**
**Тилхепене сулахая тытатпăр.**
**Тытатпăр та, туссем-тăванăмсем,**
**Каллех çĕн сулнăкра куçа уçатпăр.**

**Камсем эпир, камсем,**
**Ăçта каятпăр?**
**Камсем эпир, камсем,**
**Мĕскер шыратпăр?**

**Юрий СЕМЕНТЕР**